Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнченпе тухать

63 (7380) № ✻ Шӑмат кун, 2006 ҫулхи июлӗн (утӑ) 29-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ


Симӗс ӗҫ ҫи

## Сивӗ хӗл хӑрушӑ пулмӗ

Палартнӑ чухлӗ выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем туса илес тесен хӗл кунӗсем валли мӗншӗн пур енлӗн те тӗплӗн, ответлӑха туйса хатӗрленмелли, пур вак-тӗвеке те шута илмелли каламасӑрах паллӑ. Мӗншӗн тесен выльӑхсене ҫултаlӑк тӑршшӗпе ытларах вӑхӑт витесенче тытса усраҫҫӗ, ҫулталӑкӗпе туса илнӗ продукци калӑпӑшӗ те ҫак





тапхӑр ҫине лекет. Ҫак чӑнлӑха тӗпе хурса ӗҫлеҫҫӗ те паян «Оринино» хуҫалӑхра.

Мӗн калани пуш сӑмах мар. Ӑна ҫак цифрӑсем те аван ҫирӗплетеҫҫӗ. Хуҫалӑхра ҫак вӑхӑта нумай ҫул ӳсекен курӑксене пӗтӗм лаптӑк ҫинчен ҫулса пустарса илнӗ. Лаптӑкӗ пӗчӗкех темелле мар. Пӗтӗмпе 611 гектар ҫинчен пухса кӗртнӗ курӑксене. Планпа 637 тонна утӑ типӗтсе янталамалла пулнӑ пулсан, ку енӗпе плана тултарасси те нумай юлман, 500 тонна ытла утӑ хатӗр ӗнтӗ.

Ҫак кунсенче хуҫалӑхра паха сӗтеклӗ апат – сенажпа силос хывас ӗҫсем анлӑ сарӑлнӑ. Сенаж хатӗрлессипе плана 200 процента яхӑн тултарнӑ, силос 2060 тонна хывса хӑварма пӑхнӑ пулсан, вӑл та 2000 тоннӑна яхӑн траншейӑсенче.

– Ку сӗтеклӗ апатсене пӗтӗмпе 4 траншея янталаса хупларӑмӑр ӗнтӗ. Кунта вара, акӑ, 5-мӗш траншея часах тулмалла,– каласа парать Атапай участокӗн пуҫлӑхӗ Алексей Прокопьев.– Пӑрусем валли тырӑ сенажӗ пулать.

Атапай ферми патне симӗс масса тиенӗ автомашинӑсем пӗрин хыҫҫӑн тепри килсех тӑраҫҫӗ. Кунта Илья Кольцов, Иван Ершов, Виталий Колбасов тата Григорий Моисеев водительсем тӑрӑшаҫҫӗ. Траншейӑри массӑна вара гусеницӑллӑ тракторсемпе Сергей Быковпа Николай Репин пусӑрӑнтараҫҫӗ.

Хирте симӗс масса ҫулакансем патне те ҫитрӗмӗр участок пуҫлӑхӗпе. Илья Колбасов, Андрей Блинов механизаторсен ӗҫӗпе кӑмӑллӑ вӑл. Механизаторсем хирте хӑйсен ҫулмалли агрегачӗсемпе ҫаврӑм хыҫҫӑн ҫаврӑм тӑваҫҫӗ, техникӑна тухӑҫлӑ ӗҫлеттерме тӑрӑшаҫҫӗ. Ара, опычӗ те вӗсен пӗчӗк темелле мар. Пӗри 10 ҫул, тепри 32 ҫул трактор рулӗ умӗнче, шанса панӑ техникӑна алӑ ҫинчи пӳрнесем пекех лайӑх пӗлеҫҫӗ.

Хуҫалӑхра симӗс ӗҫ ҫи вӗҫленсе пырать пулсан, вырмана тухиччен шутлӑ кунсем юлаҫҫӗ. Тыр-пул пухса кӗртес ӗҫсене те кирлӗ шайра туса ирттерме шанӑҫ ҫук мар.

Ҫӗр ӗҫӗпе пурӑнакан ҫыннӑн канӑҫ вӑхӑт ҫук пуль ҫав. Ҫапах та кӗрхи кунсем пушшех те канӑҫсӑр темелле. Мӗн акса-лартса хӑварнине, тар тӑкса пӑхса ӳстернине ҫухатмалла мар вӗт-ха, вӑхӑтра тата ҫухатусемсӗр пухса кӗртмелле. Ҫак чӑнлӑха ӑша илсе тӑрӑшаҫҫӗ «Оринино» хуҫалӑхра.

**В. ШАПОШНИКОВ.**





**Сӑн ӳкерчӗксенче: Сергей Быковпа Николай Репин траншейӑра симӗс массӑна пусӑрӑнтараҫҫӗ; траншейӑна симӗс масса килсех тӑрать; Илья Колбасовпа Андрей Блинов механизаторсем курӑксене ҫулнӑ ҫӗрте техникӑна тухӑҫлӑ ӗҫлеттереҫҫӗ; Виталий Колбасов тата Илья Кольцов водительсем симӗс масса турттарнӑ ҫӗрте хастар.**

**Автор сӑн ӳкерчӗкӗсем.**

Райадминистрацире

## Хастар ӗҫпе тивӗҫнӗ

Хорнуй ял тӑрӑхӗн администрацийӗпе «Моргаушавтотехсервис» предприяти ыйтнине тивӗҫтерсе, район администрацийӗн пуҫлӑхӗн кӑҫалхи июлӗн 27-мӗшӗнчи 214 № йышӑнӑвӗпе ҫаксене район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ:

1. Нумай ҫул тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн тата обществӑлла ӗҫе хастар хутшӑннӑшӑн:

– **Маргарита Семеновна КАСЬЯНОВАНА**, ӗҫ ветеранне, Мӑн Шаптак ялӗнче пурӑнаканскере;

– **Калерия Васильевна ЛЕОНТЬЕВАНА**, ӗҫ ветеранне, Мӑн Шаптак ялӗнче пурӑнаканскере;

– **Галина Степановна ПАВЛОВАНА**, «Моргаушавтотехсервис» предприятин пропусксен бюровӗн дежурнӑйне;

– **Михаил Николаевич СКВОРЦОВА**, «Моргаушавтотехсервис» предприятин моторсем юсамалли цехӗн пуҫлӑхне.

2. Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫре нумай ҫул хушши тӑрӑшнӑшӑн:

**Мария Александровна АЛЕКСАНДРОВАНА**, ӗҫ ветеранне, Мӑн Шаптак ялӗнче пурӑнаканскере.

**МОРГАУШСКОЕ РАЙОННОЕ СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ**
**РЕШЕНИЕ**
**от 28 июля 2006 года № С-11/1**
**О заявлении члена избирательной комиссии Моргаушского района Чувашской Республики**

В соответствии с пунктом 6 статьи 29 Федерального закона № 67 - ФЗ "Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации" и на основании заявления члена избирательной комиссии Моргаушского района Чувашской Республики Ораиной Тамары Ивановны районное Собрание депутатов **решило:**

1. Освободить Ораину Тамару Ивановну от обязанностей члена избирательной комиссии Моргаушского района Чувашской Республики.

2. Предложить политическим партиям, общественным объединениям, собраниям избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы в срок до 9 августа 2006 года представить в Моргаушское районное Собрание депутатов предложения по кандидатуре в состав избирательной комиссии Моргаушского района Чувашской Республики.

3. Направить настоящее решение в средства массовой информации для опубликования.

**Глава Моргаушского района Ю. А. ИВАНОВ.**

Раҫҫейре

## Тенкӗлӗх укҫа пысӑкланать

**5 пин тенкӗлӗх купюра кӑларни инфляци ӳссе каясси не пӗлтермест-и?**

Июлӗн 31-мӗшӗнчех ӗнтӗ Раҫҫейӗн ҫӗнӗ банкнотине – 5 пин тенкӗлӗх хут укҫана алла тытса пӑхма май килӗ. Раҫҫей Банкӗн тулашри тата обществӑлла ҫыхӑнусен департаменчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, ҫав кунран тытӑнса Раҫҫейре тахҫантанпах кӗтнӗ купюра-гигантпа укҫа хутшӑнӑвӗсенче усӑ курма тытӑнаҫҫӗ.

Ку купюрӑна кӑларасси пирки Тӗп Банк 1997 ҫултах йышӑннӑ. Ӑнлантарнӑ тӑрӑх, ку вӑл наличнӑй укҫа-тенкӗ хутшӑнӑвӗсен кирлӗлӗхӗпе тата ҫӗршывра вӑтам ӗҫ укҫи шайӗ ӳссе пынипе ҫыхӑннӑ. Унӑн виҫи ҫӗнӗ купюрӑн номиналӗнчен икӗ хут пысӑкрах пулсанах «пысӑк укҫана» хута яраҫҫӗ. Аса илтеретпӗр, Раҫҫейре халӗ вӑтам ӗҫ укҫи шайӗ шӑпах ӗнтӗ уйӑхне 10 пин тенкӗне яхӑн. Апла пулин те 1997 ҫулта та, халӗ те экспертсенчен хӑшӗсем 5 пин тенкӗлӗх купюрӑна кӑларнине инфляци ӳсессипе ҫыхӑнтараҫҫӗ. Паллӑ ӗнтӗ, ҫынсем пӑлханаҫҫӗ: пухнӑ укҫана «ҫӑлма» васкамалла марӗ?

Кун пирки 1992-1994, 1998-2002 ҫулсенче Раҫҫей Банкӗн председателӗ пулнӑ Виктор Геращенко компетентлӑ хурав панӑ:

– Эпир ансат мар экономика анлӑшӗнче пурӑнатпӑр, ҫынсен ӑс-тӑнӗнче ҫирӗпленсе ларнӑ хӑш-пӗр стереотипсенчен хӑтӑлма май ҫук. Пенси виҫи ӳсет пулсан, хаксем ӳсесе кӗтсех тӑр. Халӗ те кун пек реакци пуласси иккӗлентермест.

Ку вӑл хӑйне евӗр тема, ун пирки пӗр енлӗ кӑна ҫирӗплетсе калама май ҫук. Ҫапах та, епле пулсан та, 5 пин тенкӗллӗ купюрӑна хутшӑнӑва кӑларни инфляцие хӑпартакан ку е вӑл экономика процесӗсен кӑтартӑвӗ тесе каламан пулӑттӑм.

Наличнӑй укҫа купюри валли ҫӗршывра кирлӗлӗх, хаксен шайлашӑвӗ тата ӗҫ укҫи шайӗ пулмалла. Кусем вара пирӗн пӗтӗмпех пур, 5 пинлӗ купюрӑна тахҫанах туса хатӗрленӗ пулнӑ, ҫакна валли ҫынсем мораль тӗлӗшӗнчен хатӗр пулман пирки кӑна ӑна хутшӑнӑва кӑларман.

Хӑш-пӗр регионсемпе уйрӑм отраслӗсенче ӗҫ укҫи шайӗ пӗчӗк мар, ӑна вара ҫынсем алӑран наличнӑйпе илесшӗн. Ҫавӑнпа та пысӑк купюрӑсем кӑларни укҫа-тенкӗ ҫитерсе парассине ҫӑмӑллатма, тӑкаксене пӗчӗклетме тивӗҫ.

Приказ

## "Трактор" уйӑхлӑх пуҫланать

Ял хуҫалӑхӗнче чи хӗрӳ ӗҫ ҫи тапхӑрӗ: выльӑх апачӗ хатӗрлемелле, вырма кантӑкран шаккать, кӗр аки пирки те шутлама вӑхӑт. Ҫак вӑхӑтра, паллах, тракторсемпе вӗсен прицепӗсемсӗр, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен ытти техникӑсӑр ӗҫсене агротехника ыйтнӑ пек пурнӑҫлама майӗ ҫук. Кӑна шута илсе республикӑра ҫулленех август уйӑхӗнче "Трактор" профилактика уйӑхлӑхӗ-операци ирттерессн йӑлара. Умра, акӑ, кӑҫал та ҫав вӑхӑт. Ҫак кунсенче Чӑваш Республикин хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тата ытти техникӑна пӑхса тӑракан Патшалӑх инспекцийӗн пуҫлӑхӗ В. Димитриев уйӑхлӑх-операци ирттерессн пирки приказ кӑларнӑ. Асӑннӑ тапхӑрта патшалӑх техника надзор ӗҫченӗсем ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑх инспекцийӗпе пӗрле ҫул ҫинче ҫӳрекен тата ӗҫре усӑ куракан тракторсемпе прицепсем, ытти хӑй тӗллӗн ҫӳрекен техника тӗллӗн тимлӗрех пулӗҫ. Тӗрӗслевсем вӑхӑтӗнче техника техосмотр тӑнине пӑхасси, питех те кивелнӗ техникӑна учетран кӑларасси, юсавсӑр техникӑпа ӗҫе тухнине палӑртасси малти вырӑнта пулӗ.

**А. БЕЛОВ.**

Юбилей

## *Саламлатпӑр*

Муркашра пурӑнакан юратнӑ аннене, аппана, йӑмӑка – **Галина Ивановна АЛЕКСАНДРОВАНА** ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе чун-чӗререн хисеплесе чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр.

Утас ҫулу такӑр, сывлӑху ҫирӗп, кун-ҫулу вӑрӑм пултӑр.

Эпир санпа мухтанатпӑр, эс пурришӗн савӑнатпӑр. Татах нумай пурӑнма сан умри ҫулне Турри уҫсах пытӑр.

**Саламлаканӗсем: пиччӗшӗ, йӑмӑкӗсем, ывӑлӗпе хӗрӗ, ҫывӑх тӑванӗсем.**



Муркашри тӗп больницӑра нумай ҫул поликлиника ертӳҫинче вӑй хунӑ тата паян та ҫак ӗҫе ответлӑха туйса пурнӑҫласа пыракан **Елена Николаевна СЕМЕНОВАНА** 55 ҫул тултарнӑ ятпа чӗрери сӑмахсемпе ӑшшӑн саламлатпӑр. Халӑх сывлӑхне сыхлани пархатарлӑ ӗҫ пулнине шута илсе сире хӑвӑра та нумай ҫул таса та сывӑ пурӑнма, хӑвӑрӑн пуян опытӑрпа пире яланах пулӑшса пыма, ҫумра малашне те телейпе ӑнӑҫу кӑна илсе ҫӳреме сӗнетпӗр. Сирӗн ӑшӑ кӑмӑлу ҫулсем иртнӗ май татах пуянланса пырасса шанатпӑр.

**Саламлапа Муркашри тӗп больница коллективӗ.**



Юратнӑ мӑшӑра, аннене, хунямана, кукамая, асаннене – Торинкасси ялӗнче пурӑнакан **Анна Арсентьевна СЕМЕНОВАНА** 60 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Эс пурришӗн Турра тав тӑватпӑр. Сана ҫуралнӑ кун ячӗпе саламласа ҫирӗп сывлӑх, телей сунатпӑр. Пире, ачусене, пурнӑҫра йӗркеллӗ пурӑнма ӑс-тӑн, вӑй-хӑват, сывлӑх панишӗн тав тӑватпӑр сана, хаклӑ, юратнӑ аннеҫӗм, пӗтӗм чун-чӗререн.

Ҫавӑн пекех унӑн ывӑлне тата мӑнукӗн Сашӑн та ҫуралнӑ кунӗсем. Вӗсене те пӗрле саламлатпӑр.

**Мӑшӑрӗ, ывӑлӗпе кинӗ, 4 хӗрӗпе кӗрӳшӗ тата 8 мӑнукӗ.**